25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 АПРЕЛЬ 22 ЮНКУН 94 (6029) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Ачасене фашистла тискерлĕхрен хӳтĕлес тĕлĕшпе пухăннă митинг

Апрелĕн 19-мĕшĕнче Мускавра ачасене фашистла варварствăран хӳтĕлеме чĕнекен митинг пулса иртнĕ. Фабрикăсемпе заводсенче, транспортра ĕçлекен хĕрарăмсем, колхозницăсем, наукăпа искусство представителĕсем, общественность деятелĕсем, Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсемпе командирĕсен арăмĕсем, амăшĕсем, аппăшĕсемпе йăмăкĕсем Союзсен Сурăх колоннăйĕ залне пухăннă. [illegible]

Митинга Ольга Чкалова уçать.

— Германи фашисчĕсем ачасене [illegible] — тет вăл.

Фашистла ирсĕрсем пирĕн çĕр çинче тăвакан хăрушă преступленисене [illegible] совет халăхĕ тавăрĕ. [illegible] ленилле шайки çавсемшĕн пуриншĕн те ответ тытĕç.

Чкалова юлташ Англири, Америкăри тата ирĕке юратакан ытти çĕршывсенчи хĕрарăмсене — фашистла захватчиксенчен асап курнă ачасене пулăшма чĕнет.

Чи малтан митингра Истра совхозĕнчи (Мускав облаçĕ) работница М. О. Лузикова тухса тăшмансене хирĕç хаяр тарăхупа çунакан сăмах каланă.

Мускаври Русаков ячĕпе тăракан больницăн главнăй врачĕ В. А. Кружков сăмах илет.

Кружков юлташ гитлеровецсен [illegible] фактсене илсе пырать.

— Эпĕ [illegible] наукăн представителĕ, — тесе хĕрӳллĕн калать Кружков юлташ, — [illegible]: фашизма — вилĕм! Вилĕм — гитлеровецсене! [illegible]

«Красный богатырь» работницă (Мускав) Е. С. Овчинникова юлташ сăмах тухса калать.

— Эпир [illegible] «Красный богатырь» [illegible]

Микрофон умĕнче — академик Л. С. Штерн. Вăл [illegible] пĕтĕм тĕнчери ученăйĕсене нацистла бандăсен усал ĕçĕсене хирĕç тухма, лабораторисенче гитлеризма çапса аркатмалли хĕçпăшалсем туса хатĕрлеме, хăмăр чумана пĕтермешкĕн вăйсене пĕрлештерме чĕнет.

Совет Союз Геройĕн Саша Чекалинăн амăшĕ **П. С. Чекалина** трибуна умне тухнине митингри çынсем тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ. Фашистла ирсĕрсем унăн ывăлне çамрăк Героя тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ.

—Çук, çĕнтерес çук вĕсем, — мăнкăмăллăн калать Герой амăшĕ, — хăратаяс çук, [illegible]

[illegible]

Митингра тата çаксем витĕмлĕ те хĕрӳллĕ сăмахсем тухса каланă: ЦК ВЛКСМ секретарĕ **О. П. Мишакова**, [illegible] **Эмилия Вильмонтайтъ**, поэт **С. Я. Маршак**, [illegible] **Г. Ф. Яремчук**, [illegible] **Е. А. Суслова**, поэт **Алексей Сурков**, Совет Союз Геройĕ **В. С. Гризодубова**, Н-ски гвардейски стрелковăй полк штабĕн начальникĕ **И. И. Манонов**.

Митингри çынсем ачасене фашистла варварствăран хӳтĕлеме пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсене чĕнсе каланине пысăк хавхаланупа йышăннă.

Митинга радио тăрăх панă. (ТАСС).

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсене

Амăшĕсемпе тантăшсем, аппăсемпе йăмăксем!

Эпир сире нимĕç çарĕ пĕр айăпсăр ачасене массăллăн вĕлернине хирĕç, вĕсене тĕнче халăхĕн курман пек мăшкăлласа асаплантарнине хирĕç протестлесе хăвăр сăмахăра калама чĕнетпĕр.

Ачасенче—халăхсен пуласлăхĕ, культурăпа этемлĕхĕн пуласлăхĕ. Ачасен пурнăçĕ—пирĕн пурнăç, вĕсен телейĕ—пирĕн телей, ачасене вилĕмпе асапсенчен хӳтĕлесси—этемлĕх умĕнчи пирĕн тивĕçлĕх.

Вăрçа кам пуçларĕ? Кам миллионшар ачасене тăлăха тăратса хăварчĕ? Кам Англири, Францири, Бельгири, Голландири, Югославири хуласемпе ялсем çине самолетсем ячĕ?

Гитлер!

Кам славян халăхĕсене, славянсен ачисене вĕлерсе пĕтерет? Кам Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла тапăнчĕ, мирлĕ çĕр çине ачавĕлерекенсен çарне ячĕ?

Гитлер!

Нимĕçсем оккупациленĕ çĕршывсенче выçăпа антăраса тата чирлесе куллен пиншер ача вилнĕшĕн кам айăплă?

Гитлер!

Гитлер хушнипе нимĕç салтакĕсем ачасене вĕлереççĕ. Фашистла ирсĕрсем ачасене аялтан вĕçсе пырса переççĕ, килĕсенче чĕррĕнех çунтарса яраççĕ, хăйсен чăсĕсен умне тăратса мина хирĕсем çине хăваласа пыраççĕ, аллисене, урисене касса татаççĕ, куçĕсене шăтараççĕ. Салтаксем иртĕнсе кайса икĕ çулти ачасен юнне юхтарса илеççĕ, ӳттирне касса илеççĕ.

Югославире, Жагубитăра, фашистсем шкула çĕмĕрсе кĕнĕ те 70 вĕренекене персе пăрахнă. Крымра, Керчь хулинче, гитлеровецсем вырăссемпе тутарсен 245 ачине вĕлернĕ. Петраково хулинче урамра ирсĕрсем Кустанович учительницăн аллинчен пĕчĕк ачине туртса илнĕ те йăна çунакан çурта ывăтнă. Ленинград фронтĕнче, «Выборы» совхозра, фашистсем хăйсен салтакĕсем умне хĕрарăмсемпе ачасене тăратнă, вĕсен хӳттипе наступлени тăвасшăн пулнă. Çавăн пек фактсем пиншерĕн шутланаççĕ.

Гитлерпа унăн ачавĕлерекенсен банди пур чухне тĕнчере пĕр хĕрарăм та хăйĕн ачин кунçулĕшĕн шикленмесĕр тăма пултараймасть. Фашизма пĕтерсе курсан çеç эпир хамăр ачасен пурнăçне çăлса хăварма пултаратпăр.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем, ачасене хӳтĕлеме кар тăрăр! Расăсен, тĕнсен, политикăллă шухăшсен, пурлăх тĕлĕшпе мĕнле пурăннин уйрăмлăхĕсене пăхмасăр, пĕр хăватлă вăй—тăван çĕршыва, ачасене юратпи—мĕнпур халăхсене пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç, Гитлерпа унăн ирсĕр бандине хирĕç кĕрешме пĕрлештертĕр.

Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем!

Пирĕн çĕре нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларса, Хĕрлĕ Çар пирĕн ачасене пĕтесрен çăлса хăварать. Хамăрăн мĕнпур вăя—Хĕрлĕ Çара пулăшма! Фронт валли ырми-канми ĕçлер.

Совет патриоткисем! Усрсе пыракан ăрăва тăван амăшĕсем пек юратса пăхăр. Тăшман ашшĕсемсĕр, амăшĕсемсĕр, килçуртсăр тăратса хăварнă ачасене тăлăха ан хăварăр. Тăлăха юлнă ачасене пăхса ӳстерме хăвăр пата илĕр. Вĕсем валли атă-пушмаксем, тумтирсем шухăр. Ача çуртĕсене шефа илĕр. Фронтовиксен, пирĕн çĕре хăйсен кăкăрĕпе хӳтĕлекенсен ачисемшĕн тăрăшăр. Хамăрăн ачасене аслă тăван çĕршывăн тивĕçлĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсем пулмалла ӳстерер.

Украинăри, Белоруссири, Молдавири, Прибалтикăри хĕрарăмсем!

Кĕрешӳре çирĕп тăрăр—телей сирĕн ачăрсем патне каялла çаврăнса килĕ. Ана вĕсем патне Хĕрлĕ Çар илсе тырать. Хĕрлĕ Çара пулăшăр, алла хĕçпăшал тытăр, партизансемпе пĕрле—хăвăрăн упăшкăрсемпе, пиччĕрсемпе, шăллăрсемпе, ывăлăрсемпе пĕрле—тăшмана хирĕç кĕрешĕр! Нимĕç захватчикĕсене пĕтерсе пырăр, вĕсен планĕсене аркатса пырĕр, вĕсен мĕнпур мероприятийĕсене хирĕç саботаж тăвăр!

Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!

Англири, Америкăри тата ирĕке юратакан ытти çĕршывсенчи хĕрарăмсем!

Фашизм сирĕн ачăрсен пуçĕсем çине те хĕç çĕклерĕ.

Ĕнер нимĕç ирсĕрĕсем Лондонра, Ковентрири, Бирмингамри хӳтĕлĕхсĕр ачасем çине бомбăсем пăрахнă. Гитлеровецсен çурăм шăммине персе хуçмасан, вĕсем ыран Америкăри ачасене пĕтерме тытăнĕç.

Эсир пусмăрçăсене курайманни сирĕн упăшкăрсемпе ывăлăрсене гитлерла Германие хирĕç пыракан аслă çапăçура хавхалантартăр. Фашистла варварсенчен асап тӳсекен ачасене пулăшăр! Ачасем валли тумтирсем, продовольстви, укçа, медикаментсем пуçтарăр.

Нимĕçсен фашистла çарĕ оккупациленĕ çĕршывсенчи хĕрарăмсем!

Эпир сирĕн асапланса пĕтнĕ, выçă, çĕтĕк-çатăк тумтирлĕ, ыйткалакан ачăрсем йĕнине илтетпĕр. Эсир гитлерла пусмăр айĕнче асапланса йынăшнине эпир илтетпĕр. Асапсен шăпи тулчĕ. Урăх кĕтме юрамасть! Фашизма хирĕç кĕрешĕве çĕкленĕр. Хăвăрăн упăшкăрсене, ывăлăрсене, пиччĕрсене-шăллăрсене фашистла тыткăнран тавăрма ыйтăр. Нимĕç салтакĕсене сирĕн ачăрсен аллинчи çăкăра тытса илме ан парăр—фашистсене продовольстви ан парăр. Гитлеровецсен мĕнпур мероприятийĕсене хирĕç саботаж тăвăр, вĕсене кашни утăмрах сăтăр туса пырăр. Оккупантсене хăвăр çĕршывăртан хăвалăр, вĕсене пĕтерсе тăкмашкăн мĕн кирлине пурне те тăвăр.

Италири, Венгрири, Румынири, Финляндири хĕрарăмсем!

Юнĕçен Гитлер пуçласа янă вăрçă сире тата сирĕн ачăрсене калама çук пысăк асап кӳчĕ. Сирĕн ачăрсем выçăпа антăраса вилеççĕ. Сирĕн упăшкăрсене Гитлер фронта хăвалать. Тăлăха юлнисен шучĕ кунран кун ӳссе пырать.

Хăçанччен кĕтĕр-ши эсир?

Хăвăрăн ачăрсем çинчен шухăшласа пăхăр. Ирсĕр вăрçа хирĕç тăрăр. Хăвăрăн ачăрсен ашшĕсене фронтран киле яма ыйтăр.

Германири хĕрарăмсем!

Гитлерпа унăн ушкăнĕ пуçласа янă вăрçă сирĕн ачăрсене питĕ пысăк асапсем кӳчĕ. Миллионшар нимĕç ачисем ашшĕсемсĕр тăрса юлчĕç. Ирсĕр Гитлерăн правительстви нимĕç çарĕ мĕнтери пысăк çухатусем тӳснине сиртен пытарса тăрать. Хăвăрăн упăшкăрсене, ывăлăрсене, пиччĕрсене-шăллăрсене ан кĕтĕр: вĕсенчен пысăк пайĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтран нихçан та каялла таврăнас çук.

Эсир хăвăр ачăрсене çăлса хăварас тетĕр пулсан, ирсĕр вăрçа хирĕç кĕрешĕр. Хăвăрăн ашшĕрсене, упăшкăрсене, каччăрсене, ывăлăрсене фронтран каялла яма ыйтăр.

Гитлера тата унăн вăрă-хурахла ушкăнне сирпĕнтерсе антарăр.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем!

Вăрçăн йывăр кунĕсенче пире пурне те таса курайманлăх пĕрлештерчĕ. Хамăрăн пĕтĕм вăя пĕтĕмĕшле тăшмана—нимĕçсен фашистла çарне çапса аркатас ĕçе парар. Амăшĕн çилли мĕнтери вăйлине пĕлсе туйса илччĕр хамăр бандитсем. Çав çилĕ ача амăшĕсемпе ачасен пуçĕ çине хĕç çĕкленĕ фашистла ирсĕрсене ĕнтсе ятăр. Пирĕн çилĕ Гитлера хирĕç кĕрешме халăхсене хавхалантартăр, фашистсене хирĕç кĕрешекен воинсен чĕрине çĕнĕ вăй вĕрсе кĕрттĕр.

Хамăрăн мĕнпур вăя—ачасене фашистла варварствăран хӳтĕленĕ çĕре!

Фашизма — вилĕм!

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

93-мĕш стрелковăй дивизирен гвардейски дивизи тăвасси çинчен

Хамăрăн Социализмлă Тăван çĕршывшăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче 93-мĕш стрелковăй дивизи паттăрлăхпа хастарлăхăн, дисциплинăпа организованнăçăн тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕ. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç татти-сыппиcĕр çапăçса, 93-мĕш стрелковăй дивизи фашистла войскăсене питех те пысăк çухатусем кӳчĕ тата противника аркатмаллах пыра-пыра çапса, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтере-пĕтере тăкрĕ, нимĕç захватчикĕсене пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе пычĕ.

Тăван çĕршывшăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн, çирĕп те хăюллă, дисциплинăллă та организованно пулнăшăн, дивизин личнăй составĕ геройлăх кăтартнăшăн:

93-мĕш стрелковăй дивизирен 26-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи тунă. Дивизи командирĕ подполковник **Н. Н. Корженевский**.

Дивизие Гварди ялавне параççĕ.

Ирĕке тухнă вырăнсенчи халăха пулăшаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке тухнă районсенчи тăвансене пулăшма Пуяндайкăри «Новая жизнь» колхоз 1 лаша, 2 сысна, 2 сурăх тата 200 пăт тырă уйăрса панă.

Х. ЛИСИН.

Заем укçине срокчен пухса çитересси— партипе совет организацисен хисеплĕ задачи

Заем сарас ĕç мĕнле пырать

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне вырнаçтарас ĕç малалла пулса пырать. Эрне хушшинче заема хуласенче 24.228.000 тенкĕлĕх, ялсенче 27.929.000 тенкĕлĕх, колхозсемпе артельсенче 10.261.000 тенкĕлĕх сарнă. Шупашкарти ĕçсыннисем заема 6.197.000 тенкĕлĕх çырăннă. Республикăра пĕтĕмпе 62.418.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Çакă вăл бюджетра палăртнипе танлаштарсан 128 процент пулать.

Апрелĕн 21-мĕш тĕлне республикăра заем укçине пурĕ 28.918.000 тенкĕ пухнă. Укçа пухас енĕпе уйрăмăнах Сĕнтĕр районĕ кăтартуллă ĕçлерĕ. Вăл колхозниксемпе единоличниксем хушшинче сарнă заем укçине 6 кун хушшинчех пухса çитерчĕ. Хĕрлĕ Чутай, Шăхасан, Вăрмар тата Советски районсем те подписка укçине пухса çитереççĕ. Çав вăхăтрах ку тĕлĕшпе Канаш, Çĕрпӳ, Йĕпреç, Куславкка, Етĕрне районĕсем юлса пыраççĕ. Ку районсенчи партипе совет организацийĕсем çырăннă заемăн укçине пухас енĕпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Çырăннă укçине тӳлесе татрĕç

Платкари «Хĕрлĕ ялав» колхозра (Шупашкар р) çĕнĕ заема 30.600 тенкĕлĕх сарчĕç, заем çырăннă укçине пĕр-икĕ кун хушшинчех тӳлесе татрĕç. Колхоз председателĕ В. Мышкин заема 1000 тенкĕлĕх, унăн ашшĕ, амăшĕ тата арăмĕ 200-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Н. МЫШКИН.

ЮЛСА ПЫРАКАНСЕМ ТЕ ПУР

ЧКАЛОВСКОЕ, апрелĕн 20-мĕш. (**Телефонпа**). Паянхи куна районра çĕнĕ заема пурĕ 1.660.500 тенкĕлĕх сарнă, вăл шутран укçине 1.297.140 тенкĕ пухнă. Чылай колхозсем подписка укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Анчах районра çак ĕçре юлса пыракансем те пур. «Путь Ленина», «Восток» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсенче подписка укçине 50 процент çеç пухнă. Кунта заем сарас енĕпе тунă ĕçсемпе лăплансa ларма пăхни курăнать.

Ялсовечĕсемпе колхозсен руководителĕсен, заем уполномоченнăйĕсен заема сарнă вăхăтрах унăн укçине пухас тĕлĕшпе те вирлĕн ĕçлемелле.

П. НИКОЛАЕВ.

ПАТРИОТИЗМЛĂ ПЫСĂК ÇĔКЛЕНӲ

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинатăн уйрăм цехĕсенче 1942 çулти Военнăй Заема çырăнса илес ĕç вĕçленсе пырать. Иккĕмĕш номерлĕ цехри рабочисем çĕнĕ заема уйăхри ĕçукçи фончĕн 102 процентчĕ чухлĕ çырăнчĕç. 8-мĕш номерлĕ цехра ĕçлекен стахановкăсем: Антонова—уйăхри ĕçукçинчен 134 процент, Захаров — 150 процент, 5-мĕш номерлĕ цехри стахановец Тарлыков — 260 процент, Гурьянов — 220 процент чухлĕ çырăнчĕç.

Паянхи куна 1942 çулти Военнăй Заема комбинатра ĕçлекенсем çĕршер пин тенкĕлĕх çырăннă.

Турханти «Комбинат» колхоз членĕсем пурĕ 253 колхозник çĕнĕ заема 150 пин тенкĕлĕх çырăннă. Р. Маймасов колхозник çĕнĕ заема—3.500 тенкĕлĕх, Н. Кадеров — 2.000 тенкĕлĕх, колхоз председателĕ М. Макаров—1.500 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Вĕсем хыççăн 1942 çулти военнăй заема О. Косякова, А. Моисеева, В. Миронова колхозницăсем 1500-шер тенкĕлĕх çырăнса илчĕç. И. Ванюков колхозникĕн семьи çĕнĕ заема 4.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те тӳлесе татрĕ.

(Хамăр корр.)

ЗАЕМ ХРОНИКИ

КУСЛАВККА. Районра Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне сарас ĕç ăнăçлăн пырать. Варасĕрти «Динамо» колхозра çĕнĕ заема 16 пин тенкĕлĕх сарнă. Колхоз председателĕ Тимофеев заема 1.500 тенкĕлĕх, ферма заведующийĕ Н. Ергачевпа бригадир Матвеев 1000-шер тенкĕлĕх çырăннă.

Çавăн пекех Чашламари «Ударник» колхозра та çĕнĕ заема 15.800 тенкĕлĕх сарнă.

А. А.

* * *

КАНАШ. Педучилище коллективĕнче отечественнăй вăрçă заемне 38.175 тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран преподавательсемпе служащисем 14.115 тенкĕлĕх, студентсем 24.060 тенкĕлĕх çырăннă. А. Семенов, В. Андреев, П. Николаев, Е. Оскарева, Р. Капитонова, В. Гаврилов студентсем 250—300-шер тенкĕлĕх çырăннă.

Е. РОМАНОВА.

* * *

КАЛИНИНО. «Труд» колхозра ĕçлекенсенчен заема çырăнмасăр пĕр çын та юлмарĕ. Колхоз председателĕ В. Михайлов заема 2000 тенкĕлĕх, унăн арăмĕ М. Трофимова 1000 тенкĕлĕх, колхозница К. Павлова 500 тенкĕлĕх, унăн ашшĕ П. Михайлов, 1000 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Е. ВАСИЛЬЕВ.

* * *

ШĂХАСАН. Вăтам шкулти преподавательсемпе служащисем пурте çĕнĕ заема уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăнчĕç.

«Красный Октябрь» колхоз членĕсем заема 24.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те тӳлесе татрĕç.

А. АГИМ.

* * *

СĔНТĔР. Юнкăри вăтам шкулта вĕренекенсем хушшинче çĕнĕ заема 4.450 тенкĕлĕх сарнă. Унсăр пуçне вĕренекенсем хăйсем коллективлăн 1.105 тенкĕлĕх çырăннă.

Т. НИКОЛАЕВА.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 20-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 20-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Апрелĕн 19-мĕшĕнче нимĕçсен 31 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 13 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 19-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 55 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 10 лавне, 19 полевой тата зенитнăй орудине, зенитнăй пулеметсен 2 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Иртнĕ эрне хушшинче нимĕçсен авиацийĕ 112 самолет çухатнă. Çав вăхăт хушшинчех пирĕн 33 самолет пĕтнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем противникăн хирĕç тăмалли паха узелне тытса илнĕ. Çакна палăртнă: юлашки вăхăтра нимĕçсем çапăçăва инçетри тылран килекен çĕнĕ резервсене кĕртсе яраççĕ. Икĕ кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 1300 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 19 оруди, 99 пулемет, винтовкăсемпе автоматсем нумай, 60.300 патрон, 3 радиостанци тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем. Артиллерирен персе, нимĕçсен 3 танкне, 10 орудине, 73 пулеметне тата 10 минометне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Красноармеец Прокофьев юлташ, çулăн участокне сыхласа тăраканскер, хăй патне 15 нимĕç разведчикĕ сывхарса пынине курнă. Боец хăраса ӳкмен. Гитлеровецсене 50 метр çывăха ярса, вăл вĕсем çине пулеметран пеме тытăннă, тӳррĕн персе 10 нимĕçе вĕлернĕ. Ытти нимĕç салтакĕсем вăраттарса саланнă. Смена пынă хыççăн пострах каялла таврăнсан, Прокофьев юлташ командованине нимĕçсен 9 автоматне тата пĕр ручной пулеметне илсе пырса панă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен Т. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ тăшманăн тылĕнче 5 кун хушши çапăçса 4 кĕпере сирпĕнтернĕ тата телеграфпа телефон çыхăнăвне нумай хутчен татнă. Çулсем çинче засадăсем туса, партизансем 130 гитлеровеца, груз тиенĕ 3 автомашинăна, трактор, мотоцикл тата радиостанци пĕтерсе тăкнă.

* * *

Вĕлернĕ нимĕç салтакĕ Альберт Эвальд çумĕнче унăн Берлина Пауль Шульц патне яма çырнă çырăвне тупнă. Аялараххра çав çырăвăн уйрăм вырăнĕсене илсе пичетлетпĕр: «..Кунта—çуркунне, эпир сивĕпе урăх аптăрамастпăр ĕнтĕ.. Карма çăварсем ĕнтĕ çуркунне пулас çапăçу татăклă та юлашки пулать тесе шанкăраççĕ.. Çав юлашки çапăçусенче мĕнçе хут пулмарăмăр пуль ĕнтĕ эпир!?.. Вырăс кампанийĕ çавтери йывăр пулĕ те вăраха тăсăлĕ тесе кам шухăшлама пултарнă-ха. Иоган Вольф ĕнер вырăссем атака тунă чухне пĕтрĕ. Эпир пысăк çухатусем тӳсрĕмĕр, мĕншĕн тесен пирĕн çине тапăнни пирĕншĕн кĕтмен çĕртен пулчĕ. Вырăссем пире пĕр минута та канăç памаççĕ.. Шухăш-кăмăлсем пирĕн пĕрех те çапăçас еверлĕ мар. Эпĕ пăшăрханатăп, нимĕн çинчен те шухăшлаймастăп. Нервсем пурин те начарланса çитнĕ».

* * *

Гитлерла бандитсем Калинин облаçĕнчи Харужево ялĕнчи мирлĕ халăха тискер кайăкла асаплантарнă. Асаплантарса, хĕнесе пĕтернĕ хыççăн вĕсем Соколова, унăн арăмне Екатеринăна, икĕ хĕрне Евдокийăпа Евгенине, ывăлĕсене Василие, Николая тата Михаила персе пăрахнă. Çав ялтах тата Дроздова, унăн арăмне тата хĕрне Анастасийăна вĕлернĕ. Колхозниксене çаратса пĕтернĕ хыççăн нимĕçсен ирсĕрĕсем яла вут тĕртсе çунтарса янă.

* * *

Франци патриочĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç хăйсене шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Апрелĕн 6-мĕшĕнче Булоньран (Франци) инçех мар вырăнта нимĕçсен боеприпассем хунă склачĕсене сирпĕнтерсе янă, çав складсем çине тапăнакансем малтан телефон çыхăнăвне татнă, унтан нимĕç резервисчĕсенчен тăракан пĕтĕм охранине пĕтерсе тăкнă.

Апрелĕн 21-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 21-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

* * *

Пирĕн Гвардейски часть (Калинин фрончĕ), противника хирĕç пĕр кун хушши çапăçса, нимĕçсен 2 танкне, пулеметсен 6 точкине, пĕр орудине, 8 блиндажне тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă. Окопсемпе блиндажсенче 130 виле хăварса, нимĕçсем каялла чакнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, икĕ кун хушши çапăçса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 11 оруди, 59 пулемет, 270 винтовка тата патронсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Пирĕн танксен ушкăнĕ Д. ялĕ патĕнче противникăн вăйлă çирĕплетнĕ линине татса кĕрсе кайнă. Танкистсем танка хирĕç пемелли 12 орудие, пулеметсен 11 йăвине, 9 блиндажа тăшман пехотипе пĕрлех пĕтерсе тăкнă. Çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 250 çын ытла вилсе пĕтнĕ. Тăшмана хирĕç кĕçĕн лейтенант Радюк ертсе пыракан танк экипажĕ пултаруллăн кĕрешнĕ, çав танкăн механик-водителĕ Елизаров пулнă, экипажра тата сержант Попов пулнă. Çак танк хăйĕн гусеницисемпе тата вут-çулăмĕпе 2 дзота, пулеметсен 4 йăвине пĕтерсе тăкнă, танка хирĕç пемелли 4 орудие таптаса çĕмĕрнĕ.

* * *

Старши лейтенантсем Дзюбело тата Овчаров юлташсем ертсе пыракан сапперсен ушкăнĕ (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) пирĕн чаçсен тылне кĕрсе кайма хăтланакан нимĕç автоматчикĕсен отрядне асăрханă. Командирсем тăшмана атакăлама йышăннă. Кĕтмен çĕртен пырса çапнине пула гитлеровецсем хăраса ӳксе пăтрашса кайнă. Кăшт тăхтасан, нимĕçсем контратака тума хăтланнă, анчах красноармеецсем тĕл персе вĕсене каялла хăваласа янă, нимĕçсен 120 салтакпа офицер вилсе юлнă.

* * *

Нимĕçсен 215-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 435-мĕш полкăн 10-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Ульрих Грубер çапла каласа панă: «Иртнĕ çулти декабрьте пирĕн дивизие Францирен вырăссен фронтне куçарчĕç. Ун чухне 10-мĕш ротăра 170—180 çын пулнă. Халĕ ĕнтĕ вĕсенчен 13 çын кăна чĕрĕ юлнă. Чăçсенче ватă салтаксем, 1914—1918 çулсенчи вăрçă участникĕсем нумайланса кайрĕç. Салтаксен шухăш-кăмăлĕ улшăнчĕ, вĕсен сăн-пичĕ те улшăнчĕ. Хăйсене вăрçă йăлтах йăлăхтарса çитернине салтаксем пытарса тăмаççĕ. Запасран килнĕ ефрейтор Штормассер пĕррехинче мана çапла каларĕ: «Чăсрах пĕттĕрччĕ ку вăрçă», терĕ. Çавăн пекех шутлаççĕ ытти салтаксем те. Германире вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăл ӳсет. Тылран çырнă çырусенче пурте пысăк йывăрлăхсем тӳсме лекни çинчен çыраççĕ».

* * *

Польша территорийĕ çинче, Бяла Подляска хули патĕнче, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта кайакан нимĕçсен маршевăй батальонĕ восстани тунă. Восстани тунă салтаксене

Юлашки 2-мĕш страницăра

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 21-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

пусарма эсэсовецсен ятарласа янă отрячĕ пынă.

* * *

Вырлăха тата ĕçри чуралла условисене пула Германири рабочисен тарăхăвĕ ӳссе пыни гитлерла шайкăна ура тарса ярать. «Ĕç фрончĕ» текенскерĕн руководителĕ Лей предпринимательсен пухăвĕнче çапла тухса каланă: «Инкек-синкексем пуласран хăраса предприятисен руководителĕсем рабочисемпе служащисен ыйтăвĕсемпе килĕшин пулмалла мар. Предприяти рабочисемпе служащисемшĕн кирек мĕнле тăрăшса сине те татăклăнах пĕтерсе хума хушатпăр, кирлех пулсан çирĕп мерăсем те йышăнатпăр».

Паллă ĕнтĕ, Германири предприятисенче фашистсем каторгăри пек йывăр условисем туса хунă. Халĕ ĕнтĕ гитлеровецсемшĕн çакă та çителĕксĕр пулнă иккен. Вĕсем, фронтра пулакан пысăк çухатусене витес тесе, рабочисемпе служащисен юлашки вăйĕсене сăрхăнтарса илме хушаççĕ. Гитлер шайкин пуçлăхĕсем хăраса ӳксе кăшкăрашни нимĕçсен тылĕ çирĕп маррине питех те уççăн кăтартса парать.

* * *

Ленинград партизанĕсем, нимĕçсен тылĕнче çапăçаканскерсем, государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне кăларни çинчен калакан хыпара пысăк савăнăçпа пĕлнĕ. Нумай отрядсенчи партизансем çĕнĕ заема пĕр кăмăллăн пулса çырăнса илнĕ.

ÇУРАКИ УМĔН

80 ГЕКТАР КЛЕВЕР АКНĂ

КУКЕÇ. Районри колхозсем юртан маларах пушаннă участоксем çине тырă акма хатĕрленеççĕ. Чылай колхозсем клевер акма тытăннă та ĕнтĕ. Иккассинчи «Майăн 1-мĕш» колхоз 30 гектар çĕр лаптăкĕ çине клевер акрĕ. Çавăн пекех Самуккассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 8 гектар, Шуркари «Победа» колхоз 10 гектар, Алгеш ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 8 гектар çине клевер акса хăварчĕç. Районри ытти колхозсем те клевер акма хатĕрленеççĕ.

Т. ЛОГИНОВ.

ÇУРАКИНЕ ТУХМА ХАТĔР

ЧКАЛОВСКОЕ, апрелĕн 20-мĕш. (Хамăр корр., телефонпа). Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Катекри Молотов ячĕпе тăракан колхоз çуракине пур енĕпе те хатĕрленсе çитрĕ. Вăрлăхсене сортласа, акма юрăхлă кондицие çитерчĕ, плугсемпе сеялкăсене, транспорт инвентарĕсене юсанă, ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. Сăмахран, 4-мĕш бригада (бригадирĕ И. Павлов юлташ) суха тума колхозра тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлекен П. Нягин, А. Кувшинов, Н. Иванов колхозниксене, сӳрелекенсем пулма А. Якушкинăпа М. Волкова колхозницăсене, тырă акма М. Волкова юлташа уйăрнă.

Колхозăн çуракине 8 талăк хушшинче ирттермелле — кун çинчен кашни сухаçă, кашни сӳрелекенпе акакан лайăх пĕлсе тăрать.

Сухаçăсемпе сӳрелекенсем, акакансемпе звеноводсем (пурĕ 30 çын ытла) хĕлкаçах колхозри агрокружока çӳренĕ. Хĕрӳ ĕçсенчен пушă вăхăтсенче колхоз агрономĕ Слесарева юлташ вĕсемпе 13 заняти туса ирттернĕ: вĕсене агротехника правилисене, яровизаци ĕçне, калчасене апат памалли йĕркесене вĕреннĕ. Агротехника занятийĕсене ирттерме Патăрьелĕнчи ялхуçалăх техникумĕн преподавателĕ Грачев тата полевод Солдатова юлташсем активлăн пулăшнă.

Комсомолецсемпе çамрăксем (комсомол организаци секретарĕ Богданова юлташ) колхоза сĕлĕ 280 центнер, тулă 200 центнер, урпа 40 центнер, пăрçи 16 центнер сортласа панă. Кунсăр пуçне кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 40 центнер, кĕл 60 центнер пухнă. Çак ĕçсенче уйрăмах А. Долгова, И. Семенов, Быков юлташсем пример кăтартса ĕçленĕ. Вĕсем кашниех кĕске вăхăт хушшинчех 60—70 ĕçкунĕ тунă. Пуçламĕш шкулăн виççĕмĕш класĕнче вĕренекенсем Николаева тата Талбарова ертсе пынипе пăрçа 60 килограмм, вир 5 килограмм алăпа суйланă. Ф. Зайцев, Г. Абрасев колхозниксем, хăйсен ватăлăхне пăхмасăрах, пĕр ĕçрен те юлмаççĕ. Пĕрремĕш бригадăри сухаçăсем Семенов, Садонов юлташсем çураки вăхăтĕнче талăкне 18—19 сехет ĕçлеме пулнă.

Çураки вăхăтĕнче колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй тата ачасен ясли ĕçлемелле. Вĕсем валли çĕрулми, пăрçа, аш-какай, çăмарта, çăнăх тата ытти продуктсем те уйăрса хунă.

Çураки ĕçĕнче мала тухнă бригадăна пама куçса çӳрекен хĕрлĕ ялав тунă, ялавпа пĕрле бригада членĕсене премилеме 2.000 тенкĕ укçа уйăрнă.

П. НИКОЛАЕВ.

Агитаторсен çуракинче вăя хурса ĕçлемелле

Хумпуç-Патăрьелĕнчи пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи агитколлектив хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетрĕ. Агитколлективра пурĕ 11 агитатор. Вĕсенчен: коммунистсем 3 çын, комсомолецсем 2 çын, ыттисем партире тăман учительсем тата ялсоветĕпе колхоз активисчĕсем. Агитколлектива пуçламĕш парторганизацин секретарĕ А. Синдячкин юлташ ертсе пырать. Вăл агитаторсене ĕçре куллен пулăшса тăрать. Юлашки икĕ уйăх хушшинче кăна агитаторсемпе 4 хутчен семинар-канашлу туса ирттерчĕ.

Агитколлектив хăйĕн политикăллă-массăллă ĕçне колхоз производствипе тата колхозниксен государство умĕнчи обязательствисене срокра тултарас ыйтусемпе тачăн çыхăнтарса пырать. Сталин юлташ лартнă задачăсем çинчен колхозниксене кашни бригадăрах тĕплĕн ăнлантарса панă. Çакна пула Хумпуç-Патăрьел ялсоветĕнчи колхозниксем Хĕрлĕ Çара ĕçлĕн те активлăн пулăшса пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирлĕх япаласем нумай пухса панă, государствăна 200 пăт ытла тырă сутнă; фронтри боецсем валли—çĕнĕ çул ячĕпе—79 килограмм, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа—90 килограмм ытла сухари ярса панă тата ытти ĕçсене те тунă. Колхоз 1941 çулта государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли пур обязательствăсене те тултарнă.

Паллах, агитколлективăн политикăллă-массăллă ĕçе татах та çулĕрех пусăма хăпартса, пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешмелле. Хальхи вăхăтра уйрăмăнах çуракине кăтартуллăн ирттерес тата вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлемелле. Çураки енĕпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлесси агитколлективсен паян кунхи чи пысăк задачи пулмалла. Эпир Хумпуç-Патăрьелĕнчи агитколлектив çак задачăна лайăххăнах пурнăçлама пултарассине шанатпăр.

Н. ИВАНОВ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Тăшман пысăк çухатусем тӳсет

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, апрелĕн 20-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Фронтăн пĕр участокĕнче пирĕн икĕ подразделени тăшмана калама çук хăвăрттăн атакăласа, ăна хăйĕн позицийĕнчен хăваласа кăларнă. Çав атакăра пирĕн боецсем тăшманăн 17 блиндажне, 2 çĕр пӳртне, 30 орудине, 3 минометне, 3 радиостанцине, продовольстви складне, питех те нумай боеприпассем тата çыхăну ĕçĕн те кирлĕ тĕрлĕ хатĕрсем тытса илнĕ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем темиçе хутчен те вăйлă контратакăсем тунă, анчах та вĕсен контратакисем ăнăçлă пулман. Çав çапăçура пирĕн подразделенисем, нимĕçсене хăйсен позицийĕнчен хăваласа кăларса, питĕ те нумай трофейăсем тытса илнĕ, çапăçу хирне нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 300 ытла вилли выртса юлнă.

Н-ски подразделенири артиллеристсем пĕр кун хушшинче противникăн 21 огневой точкине, 3 блиндажне, 2 наблюдательнăй пунктне аркатса тăкнă, артиллерин тата минометсен 2 батарейине, 4 станковăй пулеметне, шултра калибрлă 2 минометне пусарса лартнă.

Питĕ пысăк çухатусем тӳснипе, нимĕçсен командованийĕ çапăçăва хăйĕн «суркуннехи наступленин» валли хатĕрленĕ резервне кĕртет. Гитлерăн «суркуннехи» салтакĕсем питĕ начар çапăçаççĕ. Нимĕçсен 217-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 314-мĕш пехотнăй полкĕнчи 12-мĕш ротăри ефрейтор Вальтер, тыткăна лекнĕскер, çапла каласа парать: «Нимĕç салтакĕсем чылайăшĕсем тыткăна парăнасшăн, анчах гестаповецсенчен хăраççĕ».

Çав полкри тепĕр салтак тата кашни взводра иккшер гестаповец пурри çинчен каласа парать. Çав гестаповецсен калинкинех ручной пулемет пур, вĕсем салтаксем тыткăна ан парăнчăр тесе сыхлаççĕ. Салтаксем тыткăна парăнма тăрсанах вĕсене гестаповецсем перепере вĕлереççĕ.

Н. КОНОВАЛОВ.

Партизансен çĕнĕ çитĕнĕвĕсем

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, апрелĕн 20-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Партизансен пĕрлешӳллĕ отрячĕ, В. юлташ ертсе пыраканскер, район центрĕсенчен пĕринче нимĕçсен пысăк гарнизонне аркатса тăкни çинчен шичетре çырса пĕлтернĕччĕ. Халĕ çав партизансен çĕнĕ çитĕнĕвĕсем çинчен сведенисем килнĕ.

Шалти тылра партизансем пĕрре тапăнсах нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 900 çынна пĕтерсе тăкнипе калама çук тарăхса çитсе, гитлеровецсем паттăр совет патриочĕсене хирĕç хăйсен авиацине тата танкĕсене янă. Çапла пулсан та, совет паттăрĕсем хăраса ӳкмен. Çапăçури пуçарулăх çаплах партизансен аллинче.

Апрель уйăхĕнчи тĕттĕм çĕрпе усă курса, халăхшăн тавăракансен отрячĕсем çак кунсенче нимĕçсен 4 ила вырнаçнă гарнизонĕсем çине вăйлăн тапăннă. Вĕсем пур енчен те пĕр харăс пырса тапăннă. Пĕр ялта, 500 нимĕç вырнаçнă çĕрте, çапăçу виçĕ сехет ытла пынă.

Нимĕçсем пĕр каçра кăна 783 çын çухатнă. Вилнĕ гитлеровецсенчен пĕри подполковник пулнă. Кунсăр пуçне тата партизансем нимĕçсен 4 танкне, боеприпассен виçĕ складне, горючисен 2 складне, 2 тупшине, 9 дзотне, çар пурлăхĕ тиенĕ пĕр автомобильне, 700 снарядне, 3 станковăй пулеметне, темиçе вуншар лашисене пĕтерсе тăкнă. Карательнăй экспедици штабне аркатнă.

Партизансем пĕр станковăй тата 3 ручной пулемет, темиçе çĕр винтовка, 9.000 патрон, темиçе çĕр граната тытса илнĕ.

Нимĕçсене 4 ялтан хăваласа кăларнă.

И. ДЕНИСОВ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Маркелова бригади малта пырать

Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен фабрикăра Май уявĕ умĕнхи ăмăртура Маркелова юлташăн бригади малта пырать. Вăл бригада ĕç нормине кулленех 150 процент тултарма обязательство илнĕ пулсан, халĕ 160—170 процент тултарса ĕçлет. Бригадăри лайăх стахановкăсем Сироткина, Егорова, Хрисанова юлташсем нормăна 250 процент таран тултараççĕ.

Федорова бригадинчи Дикерити юлташ та нормăпа пăхнинчен икĕ хут тухăçлăрах ĕçлет.

М. РАССОХИНА.

Тухăçлă ĕçлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, апрелĕн 18-мĕш. (Хамăр корр., телефонпа). Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен чаплă уявне — Майăн 1-мĕшне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, комбинатри малта пыракан рабочисем кулленхи ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Иккĕмĕш номерлĕ цехри стахановец-столярсем Уточкин, Волков, Логинов, Назаров, Хасьянова юлташсем сменăри заданисене кулленех 200—250-шар процент тултараççĕ. Комсомолец Анисимов юлташ ертсе пыракан фронтовой бригада та хăйне панă задание тăтăшах 1,5—2 хут ирттерсе тултарать. Бригадăри паллă стахановец Прокопьев юлташ хăйĕн ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ӳстерсе пырать. Сменăри нормăна вăл апрелĕн 13-мĕшĕнче 250 процент тултарчĕ пулсан, апрелĕн 17-мĕшĕнче 273 процента çитерчĕ. Стахановец Волков юлташ та пысăк тухăçлăхпа ĕçлет.

Артельсенчи стахановецсем

КАНАШ. Хулари промартельсен коллективĕсем Май уявĕ умĕнхи ăмăртура паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. «Авангард» артель коллективĕ апрель уйăхĕн планне срокчченех тултарассишĕн кĕрешет. Çĕвĕ çĕлекен цехри А. Смирнова стахановка кулленхи нормăна 306 процент, Никифорова—335 процент, Абрамова—220 процент тултараççĕ. Балабанова, Михайлова работницăсем те нормăпа пăхнинчен виçĕ хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

Юлашки вăхăтра «1-ое Мая» артельри стахановецсем те хăйсен ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерчĕç. Сăмахран, Полизанова, Катарева тата Кондратьева стахановкăсем сменăри нормăна тăтăшах икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Сталин ячĕпе тăракан промартельри Копылова Слепов юлташсем те икĕ çын тухăçлăхĕпе ĕçлеççĕ.

П. СЕРГЕЕВ.

Çамрăксене ĕçе вĕрентеççĕ

ВĂРНАР. Урапасемпе çунасем тăвакан мастерской пĕрремĕш квартал планне 143 процент тултарчĕ, планран ирттерсе 27 çуна, 20 урапа туса кăларчĕ. Халĕ мастерской коллективĕ иккĕмĕш квартал планне майăн 1-мĕш тĕлне 50 процент тултарассишĕн кĕрешет. Кулленхи ĕçре ватă рабочисем малта пыраççĕ. 67 çулти А. Куранов, П. Филиппов, Ф. Кырлышкин юлташсем нормăна икĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Çакăнпа пĕрлех вĕсем çамрăксене те вĕрентеççĕ. Филиппов юлташ, сăмахран, халĕ Г. Храбров, А. Макаров юлташсене çуна-урапа тăвас ĕçе вĕрентет.

В. МАКСИМОВ.

„Пионер Чувашии“ танк тума

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Комсомолăн колхозсенчи организацийĕсем пионерсен пуçарăвне пысăк вырăна хураççĕ. Танк тума укçа пухас ĕçе колхозниксем хушшинче те анлăн сарнă. Комсомолăн «Партизан» колхозри организацийĕн (секретарĕ Кузьмина юлташ) активлăн ĕçленипе «Пионер Чувашии» танк тума çитĕннĕ колхозниксемпе колхозницăсем те укçа параççĕ. Паянхи куна танк тума кунта 2.435 тенкĕ укçа пухнă. Колхоз председателĕ Алексеев юлташ 75 тенкĕ, 65 çулти колхозник Михайлов 60 тенкĕ, унăн арăмĕ Евдокия Михайлова 75 тенкĕ, Корнилова, Федорова, Ефимова, Тихонова колхозницăсем 60—75-шер тенкĕ парĕç.

М. АЛЕКСАНДРОВА.

* * *

ЕЛЧĔК. Районра «Пионер Чувашии» танк тума пурĕ 4.130 тенкĕ укçа пухнă. Вăл шутран Сăрьелĕнчи туллимар вăтам шкулта 700 тенкĕ, Елчĕкри вăтам шкулта 760 тенкĕ, Çĕнĕ Пăвари вăтам шкулта 450 тенкĕ пухса панă. Танк тума укçа пухас ĕçе Патрекелĕнчи туллимар вăтам шкул коллективĕ те активлăн хутшăннă.

П. ДОКТОРОВ.

Кашни французах оккупантсене тата Виши правительствине хирĕç кĕрешме тивĕç

Генерал де Голль выступленийĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: генерал де Голль радио тăрăх мĕнпур Франци халăхне чĕнсе сăмах тухса каланă.

Вишири çĕнĕ правительство,—тенĕ де Голль, — вăл Гитлер 1940 çулта, июнь уйăхĕнче Францие тата пĕтĕм тĕнчене хирĕç пуçласа янă вăйăн çĕнĕ тапхăрĕ пулса тăрать. Германи çарĕн хальхи лару-тăрăвĕ Гитлера 22 уйăх ĕлĕкрех Франци çарĕн тата политикин тивĕçсĕр руководителĕсем панă гарантипе кăна çырлахма май çукки çинчен калать. Халĕ ĕнтĕ Гитлер татах та тивĕçсĕртерех çынсенчен пулăшу ыйтма шухăш тытнă. Францие пĕтĕмпех пăхăнтарас тесе, ăна пĕтĕмпех хăй майлă ĕçлеттерес тесе, Гитлер Виши правительстви валли коррупци тата террор искусствипе уйрăмăнах лайăх паллашнă çынсене суйлать.

Тăшмана парăнман Франция, — тенĕ малалла де Голль,—нихăçан та Вишин çав намăса çухатнă руководителĕсем тӳрленессе, çын йĕркине кĕрессе кĕтмен. Французсен хĕспăшалне тăшман аллине панă çав çынсем, французсене тата вĕсен союзникĕсене хирĕç пырса кĕрешĕве чарма приказ панă çынсем, Гитлера сутăннă çав çынсем чăнлăх çулĕ çине тухасса хăйĕн хĕспăшалне парахман Франция нихăçан та, пĕр самантлăха та ĕненмен. Паян Франци арçынĕсемпе хĕрарăмĕсем умĕнче ĕнерхи задачах тăрать. Вĕсен, пур мелсемпе те усă курса, пĕтĕм вăйран тăшмана хирĕç тата унпа пĕр шухăшлă Виши павительствине хирĕç хаяррăн кĕрешмелле. Франци халăхĕ халĕ хăй çинчен Гитлер мĕнешкел йăнăш шухăшланине кăтартса парать. Гитлер аркантех.

Маршаллпа Гопкинс тухса каланисем

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ Маршалл Америкăн Çурçĕр Ирландири войскисене пăхса тухнă хыççăн çар корреспонденчĕсене çапла каланă: ун шучĕпе, Англирен тумалли рейдсене, ударлăй отрядсен рейчĕсене Америка войскисем те хутшăнмалла, тенĕ.

Маршалл хăй Англие килнин ăнăçлă пулчĕ тенĕ. Вăл Англие халĕ Америка войскисем таттиы-сыпписĕр пырса тăмаллине палăртнă.

Малалла Маршалл Америка войскисем Исландире те, Гренландире те, Алеут утравĕсем çинче те, Австралипе Филиппинăра та пурри çинчен асăннă.

Гопкинс хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: «Эпир хамăр çавтери хаяррăн çапăçсан кăна çĕнтерме пултаратпăр». Гопкинс Америка питех те нумай пароходсем тăвасси çинчен пĕлтернĕ. «Кăçалхи çул эпир пароходсем пурĕ 8 миллион тонна водоизмещениллĕх тăвăпăр, килес çул эпир 15 миллион тонна водоизмещениллĕх тăвăпăр»,—тенĕ вăл.

Журналистсемпе калаçнă чухне Гарриман тата англичансен Çурçĕр Ирландири войскисен командующийĕ генерал Франклин пулнă.

Германин самолечĕ Швеци территорийĕ çинче

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 20-мĕш. (ТАСС). Швецин телеграф агентстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 19-мĕшĕнче кăнтăрла Швеци территорийĕ çинче Хапарандăпа Лулео хушшинчи район урлă нимĕçсен хĕвелтухăç енчен килнĕ самолечĕ вĕçсе каçнă. Çакăн хыççăн самолет шведсен Буден крепоçĕ çинче вĕçсе çӳренĕ. Ун çине шведсем зенитнăй артиллерирен пенĕ. Самолет Финлянди территорийĕ çинелле вĕçсе кайса çухалнă.

Вăхăтлăха тытса илнĕ Балтика таврашĕнчи Совет республикисенче пурăнакан халăхсене гитлеровецсем çаратаççĕ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 20-мĕш. (ТАСС). Вăхăтлăха тытса илнĕ Совет республикисенче Германи оккупанчĕсем выçлăх режимĕ туса хунă. Нумаях пулмасть продовольстви нормине, ахаль те сахалскерне, татах пĕчĕклетнĕ. Ку халăхсене калама çук тарăхтарса çитернĕ. Гитлеровецсен «Дейче цейтунг ин Остланд» ятлă хаçатĕнче пысăк статья пичетлесе кăларнă, çав статьяра «вăрçă вăхăтĕнчи пысăк йывăрлăхсене хăйсен виçипе кăна виçекен» çынсене питлесе вăрçса çырнă. Германи влаçĕсем, —тет çав статьян авторĕ,—«хăйсен çарне кирлĕ япаласем тăратассине чи кирлĕ ĕç тесе шутлаççĕ».

«Çĕр ĕçĕпе пурăнакан пуян область—Остланд хăйĕн продовольствине вăрçă ĕçне туса пынă çĕре памалла»,—тет малалла статья авторĕ. Çапла çырать те, унтан йĕкĕлтесе, Балтика таврашĕнче пурăнакан халăхсене вĕсен çиесси килет пулсан «ытларах хăйсем валли пулă тытчăр», тесе канаш парать.

Нимĕçсем Балтика таврашĕнчи халăхсенчен мĕн май пур, çавсене пурне те туртса илеççĕ. «Дейче цейтунг ин Остланд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, «Остланд» тенĕ облаçăн имперски комиссарĕ приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх Латвин, Эстонин, Литван пур общинисемпе пур хулисенче те сысласене хисепе илмелле. Официальнăй кун çинчен çапла каланă: ку ĕçе «Остландра сысна пăхса ĕрчетес ĕçе лайăхрах сăнаса пырас тесе» тăваççĕ,—тенĕ. Анчах та чăннипе ăна гитлеровецсем Балтика таврашĕнчи хресченсене сысăрен çаратса тухас ĕмĕтпе тăваççĕ.

Гитлеровецсем Балтика таврашĕнчи Совет республикисенче пурăнакан халăхсене вĕлерессипе хăратса пурăнаççĕ, «çĕнĕ йĕркене» пĕр сăмах чĕнмесĕр чура пек пăхăнма хушаççĕ. Облаçри комиссар Фуст, сăмахран, нумаях пулмасть çапла каланă: латышсен пур йывăрлăха та хăйсем çине илмелле», тенĕ.

Францире заложниксене каллех вĕлереççĕ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 18-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вишири корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Францин оккупациленĕ зонинче гитлеровецсем, Германи салтакĕсем çине тапăннине хирĕç ответлесе, 35 заложнике персе вĕлернĕ.

ЖЕНЕВА, апрелĕн 20-мĕш. (ТАСС). Па-де-Кале департаментĕнче чугунçулсем çинче çĕрле темиçе хутчен те саботажсем пулса иртнĕ хыççăн нимĕçсен çар влаçĕсем апрелĕн 14-мĕшĕнче 15 заложнике персе вĕлернĕ тесе пĕлтернĕ. Кунсăр пуçне тата заложниксен тепĕр труппине те, 20 çынна, çав кунах персе вĕлерни çинчен пĕлтернĕ. Кусене Ланс хули çывăхĕнче (Па-де-Кале департаментĕнче) «нимĕç салтакĕсем çине тапăннăшăн» тесе вĕлернĕ.

Черчилль Англин бомбардировочнăй авиацин командующине саламлани

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: премьер-министр Черчилль Англин бомбардировочнăй авиацин командующийĕ маршал Гаррис патне телеграмма янă. Çав телеграммăра Англин бомбардировщикĕсем Германин Аугсбургри завочĕсем çине вĕçсе пырса тапăннине калама çук пысăк та чаплă ĕç тесе хакланă. Бомбардировщиксем, операци пуçламăшĕнче пысăк çухатусем тӳснĕ пулин те, кăнтăр кунĕнчех Германин варринех шăтарса кĕнĕ, питех те кирлĕ пунктсем çине калама çук тӳрĕ тĕллесе бомбăсем пăрахнă. Çав тапăнура пулнă офицерсене тата рядовойсене Черчилль Англи правительстви ячĕпе тав тунă.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçăн пĕр эрнери итогĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 19-мĕшĕнче вĕçленнĕ иртнĕ эрнере Англин авиацийĕ 45 бомбардировщик тата 24 истребитель çухатнă. Англин авиацийĕ çавăн пекех тата Сывăхри Хĕвелтухăçĕнче 9 самолет çухатнă. Çав вăхăт хушшинче противник Хĕвеланăç Европăра—23 самолет, Сывăхри Хĕвелтухăçĕнче — 22 самолет, Англи çийĕнче тата ун çывăхĕнче—2 самолет çухатнă.

Дориона вĕлерме тапаннă

ЖЕНЕВА, апрелĕн 20-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви Парижран çапла пĕлтерет: Реннра, муниципальнăй театр залĕнче Дорио сăмах тухса каланă чухне иккĕмĕш ярусран бомба пăрахнă, бомба партерти темиçе хушшинче çурăлнă. Дориона вĕлереймен. Вĕлерме тапăннă çынние тыраса тупайман.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

В целях лучшего обслуживания населения города и рабочих поселков, работа Чебоксарского Горисполкома и его отделов с 22-го апреля 1942 года будет производиться с 10 часов утра до 18.30 вечера.

ЧЕБОКСАРСКИЙ ГОРИСПОЛКОМ

Чувашскому тресту МАСЛОПРОМА ТРЕБУЮТСЯ опытные бухгалтера-ревизоры и старшие бухгалтера маслозаводов.

Оплата по соглашению.

Обращаться в трест по адресу: гор. Чебоксары, улица Герцена, дом № 32, к главному бухгалтеру.

Пахча-çимĕç калчисене хăвăртрах çитĕнтерер

Колхозсемпе совхозсен пахча-çимĕç хуçалăхĕнчи ĕçсен ответлă тапхăрĕ пуçланчĕ. Малта пыракан колхозсем парниксенче ир пулса çитекен купăста, помидор вăрлăхĕсене акаççĕ, каярах юлса ӳсекен çимĕçсен вăрлăхĕсене акма хатĕрленеççĕ.

Кăçал пахча-çимĕç культурисен планĕнче калчалантарса ӳстермелли культурăсем (купăста, помидор) тĕп вырăн йышăнаççĕ. Иртнĕ çултипе танлаштарсан, кăçал пирĕн купăста чылай пысăк çĕр лаптăкĕ çине акмалла. Çапла тума фронтпа тыл ыйтаççĕ. Çавăнпа çак культурăсене акас ĕçе вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса ирттермелле.

Купăстапа помидора пысăк тухăçлăн туса илме пирĕн кăçал пур условисем те пур. «Сортсемовощь» Чăваш республикинчи отделенийĕн тата нумай колхозсен пахча-çимĕç вăрлăхĕсем, вăл шутра ир пулса çитекен купăстапа помидор вăрлăхĕсем те çителĕклĕ таранах пур.

Купăста калчине ӳстерме хаклă тăракан парниксем кирлĕ мар. Купăста тата помидор калчисем ăшă панчасенче те лайăх ӳсме пултараççĕ. Анчах те уйрăмăнах çакна палла тумалла: пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса илес пулсан, калчасене вăхăтра акса ӳстермелле. Калча пысăк пахалăхлă пуласси вăхăтра акнинчен килет. Имшеркке калчасенчен пысăк тухăçлă пахча-çимĕç кĕтме çук. Пахча-çимĕç лартса тăвас ĕçри стахановецсен хăйсен правили пур: «Калчи мĕнле—çимĕçĕн тухăçлăхĕ те çавăн пек». Çавăнпа пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса илес ĕçре вăрлăхсене вăхăтра та хăвăрт, лайăх акса хăварни кирлĕ.

Пахча-çимĕç тăвас ĕçри стахановецсен опычĕсем кăтартса панă тăрăх ир пулса çитекен купăстана март уйăхĕн вĕçĕнче акмалла. Каярах юлса пулакан купăстана апрель уйăхĕн иккĕмĕш çурри пайĕнче, помидор вăрлăхĕсене апрелĕн 8-10-мĕш кунĕсенче акмалла. Çак вăхăта нумай колхозсем ирттерсе янă. Калчалантарса лартмалли пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене акас тĕлĕшпе Вăрнар, Çĕмĕрле, Ишлей районĕсем уйрăмах кая юлаççĕ. Çак районсенче ир пулса çитекен купăста вăрлăхĕсене халĕ те акса çитермен. Ир пулакан купăста, помидор вăрлăхĕсене акас ĕçе паянах туса çитермелле. Каярах юлса пулакан купăста, помидор вăрлăхĕсене те май уйăхĕччен акмалла. Акнă вăрлăхсене лайăх пăхса çитĕнтерессишĕн çине тăрса ĕçлемелле.

Пахча-çимĕç тăвас ĕçри мастерсем чылайĕшĕсем Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕç. Вĕсен вырăнĕсене çĕнĕ çынсем йышăнчĕç. Çĕрĕç органĕсенчи специалистсен çав çĕнĕ çынсене вĕрентмелле, вĕсене ĕçлĕ пулăшу памалла. Пахча-çимĕçсен калчисене вăйлăн çитĕнтермелле, вĕсене йăрансем çине куçарса лартсан, малалла ӳстерессишĕн те пур майсемпе те тăрăшмалла. Купăста, помидор, хăяр, арбуз, дыня, тутлă кăшман, кавăн калчисене торфпа тăпра хутăшăнтарса тултарнă кӳршексем, ешĕксем çинче ӳстерессине анлăн сармалла. Калчасене агротехника кăтартнă пек апатлантарса ӳстерессине организацилемелле.

Çакăнпа пĕрлех, пахча-çимĕç калчисене ӳстерес ĕçре вĕсене уй пăрçисенчен, уйрăмах шăшисенчен тата ытти инкек-синкексенчен сыхлассине те манмалла мар. Иртнĕ çул чылай колхозсем пахча-çимĕçсене çак тăшмансенчен упраса хăвараймарĕç. Кăçал калчасене уйрăмах шăнасем сиенлеме пултарас хăрушлăх пысăк. Çавăнпа купăста, помидор лартса ӳстермелли участоксене дезинфекцилемелле. Парниксемпе панчасене таса тытмалла. Шăшисене, çĕр пăрçисене тата ытти хурт-кăпшанкăсене хирĕç кĕрешме кирлĕ имçамсем хатĕрлемелле.

Калчасене çĕр пăрçисенчен упраса 5—7 процентлă анабадуст çапмалла, пиретрум çăнăхне тусанпа, кĕлпе хутăштарса калчасене çӳхен тусанлантармалла. Агрономсен, çĕрĕç органĕнчи работниксен колхозницăсене пахча-çимĕçсене сиенлекен хурт-кăпшанкăсене хирĕç кĕрешме вĕрентмелле. Лайăх калчасем ӳстерсе пысăк тухăçлă пахча-çимĕçсем туса илессишĕн çирĕп кĕрешмелле.

Р. ОСАНОВ.

Чăваш АССР Наркомземĕн пахча-çимĕç управленийĕн начальникĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти рнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн га комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—

НТ 453 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: м.